# Совет Союзĕн Геройĕ Иван Кабалин

**Канаш хулинче пĕр урам тата шкул И.А.Кабалин ячĕпе хисепленеççĕ. Манăн çак çын çинчен тĕплĕнрех пĕлес килет.**

**А.АРТЕМЬЕВА.**
Канаш районĕ.

Совет Союзĕн Геройĕ Иван Андреевич Кабалин 1923 çулта Комсомольски районĕнчи Александровка ялĕнче çуралнă. Улатăрти чукун çул транспорчĕн техникумĕнчен /1954/ тата Тбилисири чукун çул транспорчĕн институтĕнчен вĕренсе тухнă /1960/.

1941 çулхи май уйăхĕнче И.Кабалина Хĕрлĕ Çара илнĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине июльте кайнă. Нимĕç фашисчĕсемпе Кăнтăр-Хĕвеланăç тата 3-мĕш Украина фрончĕсенче çапăçнă.

И.Кабалин 1943 çулхи сентябрĕн 26-мĕшĕнче паттăрлăхпа палăрнă. Ентеш ун чухне стрелоксен 25-мĕш дивизийĕн /3-мĕш Украина фрончĕ, 6-мĕш арми/ 78-мĕш полкĕн миномет ротин отделени командирĕ пулнă. Днепр шывĕ урлă каçнă хыççăн совет салтакĕсем виçĕ талăк хушши фашистсемпе хĕрӳ çапăçнă. 20 атакăна сирсе янă, 5 пулемета тĕп тунă, тăшман салтакĕсене нумай пĕтернĕ.

Вăрçă хыççăн 1946 çулта Иван Андреевич Канашри вакунсем юсакан заводра ĕçлеме пуçланă. Унтан тĕрлĕ çулсенче Украинăри Черкассы облаçĕнче, Карели Республикинче инженерта ĕçленĕ. 1969 çулта Чăваш Ене таврăннă. Канашри вакунсем юсакан завода диспетчера вырнаçнă.



И.Кабалина Совет Союзĕн Геройĕн ятне 1944 çулхи февралĕн 22-мĕшĕнче панă. Ленин, Хĕрлĕ Ялав, II степень Тăван çĕршыв вăрçин орденĕсемпе, медальсемпе чысланă. 1978 çулта Иван Андреевич ятне ЧАССР Ĕç Мухтавĕн тата Паттăрлăхăн Хисеп Кĕнекине кĕртнĕ.

И.Кабалин 1982 çулта Канаш хулинче пурнăçран уйрăлнă.